(cc) BY



***Виноградов Юрий Михайлович***

канд. филол. наук, доцент, ведущий научный сотрудник

Центр регионального развития БУ ЧР ДПО

«Чувашский республиканский институт образования»

г. Чебоксары, Чувашская Республика

# МАТЕРИАЛ ЭФУ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА ДЛЯ 9 КЛАССА ПО ТЕМЕ «ТЕКСТ»

***Аннотация**: в статье описывается материал, рекомендованный для включения в ЭФУ по родному (чувашскому) языку для 9 класса по теме «Текст», раскрываются трудности, возникающие в выборе текстов и составлении заданий. Целью работы является выявление специфики подготовки материалов для ЭФУ по родному (чувашскому) языку для 9 класса по теме «Текст» и определение эффективных способов преодоления возникающих в ходе работы трудностей. Методы исследования: изучение содержания учебников по родному (чувашскому) языку для 4–9 классов относительно темы «Текст», сопоставление методики изложения темы в учебниках, сбор языкового материала из публицистической литературы, его анализ и обобщение, составление рекомендаций по подготовке материалов для ЭФУ. Обсуждение результатов. Обмен опытом с составителями ЭФУ по чувашскому языку. Делается вывод о том, что в ходе составления материалов ЭФУ по теме «Текст» требуется умение сокращать тексты, сохраняя их функциональное и эстетическое качество.*

***Ключевые слова**: текст как результат устного и письменного общения, структура теста, классификация текстов, критерии классификации текстов, стили устных и письменных текстов, публицистический стиль, жанры публицистического стиля (заметка, репортаж, очерк, рецензия, интервью).*

***Аннотаци**: статьяра 9-мĕш класăн тăван чĕлхе (чăваш чĕлхи) электрон вĕренӳ кĕнекин «Текст» теми валли хатĕрленĕ материал мĕнлерех пулнине, тема валли текстсемпе хăнăхтарусем ăслайланă чухнехи йывăрлăх мĕнрен килнине каланă. Ĕçĕн тĕллевĕ 9-мĕш класăн тăван чĕлхе (чăваш чĕлхи) электрон вĕренӳ*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*кӗнекин «Текст» теми валли материал хатӗрленӗ чухне еплерех ӗҫлемеллине, автор умӗнче тухса тӑракан йывӑрлӑха мӗнле сирсе ямаллине кӑтартасси пулса тӑрать. Тӗпчев меслечӗ: 4–9 классен тӑван чӗлхе (чӑваш чӗлхи) вӗренӳ кӗнекин «Текст» темӑпа ҫыхӑннӑ содержанине тӗпченӗ, темӑна уҫса пару меслетне танлаштарса тишкернӗ, публицистика материалне пухнӑ, ӑна тишкерсе ЭФУра усӑ курас енӗпе сӗнӳ хатӗрленӗ. Ӗҫе хакласа сӳтсе явни. ЭФУ тӑвакансемпе канашланӑ, вӗсен сӗнӗвне шута илнӗ. Пӗтӗмлетӳре каланӑ тӑрӑх, ЭФУ валли «Текст» темӑпа материал хатӗрленӗ чухне чӑн текстӑн функцийӗпе илемлӗх пахалӑхне сыхласа хӑварса кӗскетӳ тума пӗлмелле.*

***Тӗп сӑмахсем***: *текст чӗрӗ калаҫу тата ҫырупа усӑ курса хутшӑннин результачӗ пулни, текст тытӑмӗ, текстсене ушкӑнлани, текстсене ушкӑнламалли критерисем, калаҫупа ҫыру тексчӗсен стилӗсем, публицистика стилӗ, публицистика стилӗн жанрӗсем (заметка, репортаж, очерк, рецензи, интервью).*

«Текст» темӑна шкул ачисем, тӗрӗссипе, кӗҫӗн классенчех вӗренме пуҫлаҫҫӗ. Ачасене час-час паракан чи пирвайхи ыйтусем (*Калавра сӑмах мӗн ҫинчен пырать? Калав сире мӗнле ҫын пулма чӗнет? Хайлавра кӑтатнӑ ачан куҫӗ мӗн тӗслӗ? Ача мӗн тума юратать?*) текст темине, тӗп шухӑшне, манер енчен сӑнлав, ӑслав е калав пулнине тата ыттине чухлама хистеҫҫӗ. 4-мӗш класра текст тытӑмӗпе тӗплӗн паллаштаратпӑр [1; с. 50–71], мӗншӗн тесен кашни ача текст тума пӗлмелле. 5–9 классен хальхи вӗренӳ кӗнекисенче текстӑн ку е вӑл енне кашни класра уйрӑммӑн ӑнлантарма, унччен вӗреннӗ темӑсене системӑллӑ аса илтерме палӑртнӑ [6, с. 22–26, 31–34, 42–46, 52–55; 5, с. 189–200; 4, с. 192–204; 2, с. 205–215; 3, с. 149–201]. Ҫакӑ урок темисенче те, хӑнӑхтарусенче те палӑрать: ҫӗнӗ тема ячӗсене хулӑн тата пысӑк сас паллисемпе пичетленӗ, аса илӳ материалне ку е вӑл хӑнӑхтарӑвӑн хушма ӗҫӗсен картине ҫӑлтӑрпа кӑтартса кӗртнӗ.

Программӑра палӑртнӑ йӗркене пӑхӑнса текст стилӗсене 6-мӗш класран пуҫласа 9-мӗш таран пӗрерӗн-пӗрерӗн вӗрентетпӗр: ансат калаҫупа сӑпайлӑ калаҫу [5, с. 189–195], ӑслӑлӑх стилӗ [4, с. 196–204], ӗҫлӗ стиль [2, с. 207–215], публицистика стилӗ [3, с. 159–201].


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Стильсене çыру тексчĕсем çине таянса ăнлантарас меслет тĕп вырăнта тăнă пирки «Пуплев тата çыру» темăна 9-мĕш класра «Текст» тема ăшне кĕртнĕ. «Текст» ятлă пысăк пайăн темисене (вĕсене 9 урока шута илсе хатĕрленĕ) çак черетпе вĕрентме палăртнă: 1) текстăн çыру форми, 2) публицистика стилĕ. Пĕрремĕш ушкăна çак темăсене кĕртнĕ: 1) «Чĕлхе, пуплев, çыру», 2) «Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ». Вĕсем текст калаçу продукчĕ те, çыру продукчĕ те пулнине ĕнентерме кирлĕ. Иккĕмĕш ушкăна кĕртнĕ темăсем те иккĕ: 1) «Публицистика стилĕ», 2) «Публицистика жанрĕсем». Вĕсене вĕренсе ачасем публицистика стилĕпе, унăн жанрĕсемпе паллашаççĕ. Публицистикăна вĕреннĕ хыççăн вара стиль теми пĕтет.

Паллах, пĕрлехи патшалăх экзаменĕнче сочинение çырнине шута илсен ачасем ăслăлăх стильне 9-мĕш класра тин вĕренмелле пек туйăнать, анчах кая юлас хăрушлăх пур. Çавăнпа паллашупа хăнăхăва 8-мĕш класрах пуçлама йышăнтăмăр.

Публицистика стилĕ анлă сарăлнă стиль. Жанрĕсем илĕртӳллĕ. Çавăнпа ăслăлăх стилĕпе публицистика стильне танлаштарса вĕрентме меллĕ. Практикăра репортаж жанрĕ сарăлман та, тĕслĕх тупма йывăр. Заметкăсăр тата справка очерксăр пуçне ытти жанрсен (вăл шутра яланхи портрет очеркĕн, çул çӳрев очеркĕн) тексчĕсем чылай пысăк. Калăплă текстсем валли ЭФУра вырăн нумай пама çук. Интервью тĕслĕхне туллин пама пачах май килмест. Çавăнпа текстсене кĕскетме е асăрхаттару тума тивет. Ку вара ЭФУ хатĕрлекенсене питĕ чăрмантарать, мĕншĕн тесен текстсен пахалăхĕпе уйрăмлăхне сыхласа хăварма ансат мар. Кунсăр пуçне хăнăхтарусем те кирлĕ.

Хăнăхтарусем тенĕрен, чăваш çырулăхĕпе çыхăннă теори материалĕ вăл хăй текстсенчен тăрать. Вĕсем çине таянса эпир чăваш çырăвĕн теорийĕпе историне ăнланнине пĕлмелли ыйтусемпе пĕрле текст теорине аса илмеллисене те патăмăр. Чи пирвайхи тема валли сĕннĕ материал, тĕслĕхрен, çакнашкал:

Чĕлхе, пуплев тата çыру.

Чĕлхе специалисчĕ мар çынна чĕлхепе пуплев хушшинче уйрăмлăх çук пек туйăнать. Тĕрĕссипе, пур. Чĕлхе вăл хутшăну хатĕрĕ пулса тăрать, пуплев –


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

хутшăну чăнлăхĕ. Чĕлхене пайăрсăрлăх, пуплеве пайăрлăх кăтартуллă. Пуплеве тишкерсе тĕпчевçĕсем чĕлхе тытăмĕ мĕнле иккенне палăртаççĕ. Ку тытăма пĕлни пуплеве нормăлама пулăшать.

Пуплеве алăпа хут çине, техника хатĕрĕсемпе электрон носительсене çырса хума пулать. Хут çине çырнă текст тăрăх чăн калаçу епле илтĕннине пĕлме çук. Чăн калаçăва тепĕр хут илтме техника хатĕрĕсем анчах май параççĕ. Чăн пуплев паллă вăхăтра тата вырăнта пĕр хут пулать те çухалать. Çырса илнĕ текста кирек хăçан та, кирек ăçта та тепре вулама е итлеме май пур.

Чĕлхесем расна пулни пуплевре палăрать. Акă сăмах майлашăвĕн пайĕсем вырăсла пуплевре паузăпа кĕрет уйрăлса тăраççĕ, чăваш пуплевĕнче пĕрлешсе каяççĕ: *синее небо – сенкер тӳпе; субботний день – шăмат кун.*

Ыйтусем:

1. Чĕлхе тытăмне мĕн тăрăх пĕлме пулать? (Хурав: пуплев факчĕсем тăрăх).

2. Хут çине çырнă пуплев тексчĕпе электрон носитель çине çырнă текст хушшинче епле уйрăмлăх пур? (Хурав: Çыру тексчĕ калаçаканнин сассине кăтартаймасть, электрон ниситель – кăтартать).

3. Теори тексчĕн пĕтĕмлетӳ пайне хăш предложенисем кĕреççĕ? (Хурав: Чи юлашки абзацра çырнă предложени кĕрет).

4. Теори текстне мĕнле пуплев кĕввипе çырнă?

| | |
|---|---|
| 1) ăславпа;<br>2) калавпа | 3) сăнлавпа*<br>4) пуплев кĕвви палăрмасть |

5. Теори текстне мĕнле стильпе сырнă?

| | |
|---|---|
| 1) публицистика стилĕпе<br>2) ансат пуплев стилĕпе | 3) илемлĕ литература стилĕпе<br>4) ăслăлăх стилĕпе* |

Ĕç: Пушă клеткăсене тултарăр.

| Чĕлхе | Пуплев |
|---|---|
| хутшăну хатĕрĕ | |
| чĕлхен пайăрлăхĕ çук | |
| илтмелли, курмалли пулăм мар | |
| пуплеве нормăлама пулăшать | пуплевре чĕлхе тытăмне хирĕçлекен тĕслĕхсем пулма пултараççĕ |
| пуплевре палăрать | чĕлхе тытăмне курма май парать |


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ку материалăн теори пайĕн юлашки икĕ абзацне вырăн перекетлес тесе малтанхи варианта кĕртмесĕр тăтăмăр, анчах текста пĕтмĕшсĕр хăварма çук, мĕншĕн тесен ачасене текст теорийĕпе тачă çыхăннă ыйтусем паратпăр.

Калăпăшĕ пысăк пулнăран «Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ» темăн материалне икĕ урокра вĕренмелле тăвас терĕмĕр.

Публицистика стилĕпе çырнă текст ку е вăл вырăнпа тата вăхăтпа çыхăнать. Çавăнпа, чылай чухне, текст ăçта тата хăçан пичетленнине кăтартмалла пулса тухать.

Публицистика стилĕпе тӳррĕн çыхăннă ыйтусемпе ĕçсем йывăр мар – кĕске текст тупасси кăна чăрмавлă. Сире эпир публицистика стилĕпе пĕтĕмĕшлĕн паллаштракан урок материалне кăтартасшăн. Акă вăл:

Ку е вăл халăхăн литература чĕлхи вăйлă аталаннине стильсем пурри тăрăх пĕлме пулать. Çак стильсенчен пĕри публицистика стилĕ шутланать. Вăл – халăх, патшалăх пурнăçĕ, тĕнче лару-тăрăвĕ çинчен çырса е каласа паракан хаçат-журнал, радиопа телевидени стилĕ. Тĕслĕхрен:

«Пысăк тăхтава» хутшăннă.

2020 çулта Чăваш Енре 3 пине яхăн ача пĕтĕм Раççейĕн «Пысăк тăхтав» проектне хутшăннă.

Шкул ачисем тĕрлĕ тĕрĕслев витĕр тухнă. Чăваш Енĕн 43 ачи Чулхулара проектăн çурма финалĕнче пулĕ. «Пысăк тăхтав» çĕнтерӳçисем (10-мĕш класра вĕренекен 300 ача) аслă шкула кĕрсен вĕреннишĕн тӳлемешкĕн 1-ер миллион тенке тивĕçĕç. 8–9 классенче вĕренекен 300 çĕнтерӳçе 200-шер пин тенкĕ парĕç. Финала тухнă 1200 ача «Артека» кайма путевкăсем илĕ.

Тăрăшакансемшĕн, пултаруллă ачасемшĕн çул уçă. *(«Хыпар». – 2020. – 08.)*

Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Публицистика стилĕ вăл –

1) илемлĕ литература стилĕ;

2) хаçат-журналта, радиопа телевиденире усă куракан стиль;*

3) документсен, ĕç хучĕсен стилĕ;

4) ăслăлăхра усă куракан стиль.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

2. Панӑ текстӑн пуҫламӑш пайӗ шутне мӗн кӗрет?

| | |
|---|---|
| 1) текстӑн 3-мӗш абзачӗ<br>2) текстӑн 1-мӗш абзачӗ* | 3) текстӑн 2-мӗш абзачӗ<br>4) текстӑн пуҫламӑшӗ ҫук |

3. Панӑ текстӑн тӗп пайӗ шутне мӗн кӗрет?

| | |
|---|---|
| 1) текстӑн тӗп пайӗ ҫук | 3) текстӑн 2-мӗш абзачӗ* |
| 2) текстӑн 3-мӗш абзачӗ | 4) текстӑн 1-мӗш абзачӗ |

4. Панӑ текстӑн пӗтмӗш пайӗ шутне мӗн кӗрет?

| | |
|---|---|
| 1) текстӑн пӗтмӗш пайӗ ҫук | 3) текстӑн 1-мӗш абзачӗ |
| 2) текстӑн 2-мӗш абзачӗ | 4) текстӑн 3-мӗш абзачӗ* |

5. Тӗп пая кӗрекен предложенисем ҫыхӑнса мӗнле йышши текст тӑваҫҫӗ?

| | |
|---|---|
| 1) сыпӑнчӑклӑ текст<br>2) паралельлӗ текст* | 3) хутӑш текст<br>4) нимле текст та тумаҫҫӗ |

Ӗҫ: *Тенкӗ* сӑмаха падежсем тӑрӑх вӗҫлӗр те текстра усӑ курнисемпе танлаштарӑр: йӑнӑш ҫук-и?

Очерк публицистика стильне пӑхӑннӑ чи сӑнарлӑ жанр шутланать. Ӑна чӑнлӑха хӑйне майлӑ куракан ҫынсем анчах ҫырма пултараҫҫӗ. Хитре очерк, паллах, калӑпӑшӗпе те пысӑк пулать. Ун пек очерксене эпир тӗп кӗнекене ҫеҫ кӗртейрӗмӗр. Электрон кӗнеке валли справка очерк сӗнтӗмӗр. Апла пулин те пирӗн материал хӑйӗн темипе пӗлтерешлӗ: текстра сӑмах вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнӗ чӗлхеҫӗ В.А. Андреев доцент ҫинчен пырать.

Очеркра автор пӗр-пӗр пӗлтерӗшлӗ пулӑм е факт ҫинчен кӗскен пӗлтерет е каласа парать, хӑй шухӑшне усӑмлатнипе пӗрлех вулавҫа шухӑшлама, тишерме хистет, пӗтӗмлетӳ тума пулӑшать. Тӗслӗх:

Андреев Василий Алексеевич.

Чӗлхеҫӗ, тюрколог, филологи ӑслӑлӑхӗн кандидачӗ (1987), доцент. 1986 ҫултанпа И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшӑх университетӗнче чӑваш тата туркӑ чӗлхисене вӗрентнӗ. 1994–1995 ҫулсенче Турцире Стамбул университетӗнче ӗҫленӗ. Чӑваш чӗлхин грамматикипе, тӗрӗк чӗлхисемпе статьясемпе кӗнеке ҫырнӑ.

Чӑваш Республикин Канаш районӗн Ешкилт ялӗнче 1960 ҫулта ҫурла уйӑхӗн 1-мӗшӗнче ҫуралнӑ, Шупашкарта 2002 ҫулта ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнче вилнӗ.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ыйтусем:

1. Текстра сăнланă пĕлтерĕшлĕ пулăм сирĕншĕн мĕн: очерк геройĕ ученăй пулни-и, чĕлхеçĕ пулни-и, аслă шкул преподавателĕ пулни-и е Турцире ĕçлени-и? Куç умне тӳрех тухса тăраканни – В.А. Андреев нумай енлĕ аталаннă чаваш çынни пулни мар-и?

2. В.А. Андреев пек нумай енлĕ аталаннă çын пулас тесен хăвăрта мĕнле-мĕнле пахалăх аталантармалла? Кун валли вăй епле çитермелле?

3. Очерк сире мĕне вĕрентет?

4. Пană текст хăйĕн пуплев кĕввине кура мĕн?

| | |
|---|---|
| 1) калав<br>2) сăнлав* | 3) ăслав<br>4) пуплев кĕвви çук |

5. Предложенисен çыхăнăвĕ мĕнле текст тăвать?

| | |
|---|---|
| 1) сыпăнчăклă<br>2) параллельлĕ* | 3) хутăш<br>4) нимле йышши текст та палăрмасть |

Ĕçсем:

1. В.А. Андрееев çинчен Интернетра материал тупса вуласа тухăр.

2. Панă темăсенчен пĕрне суйласа илĕр те 3–4 предложениллĕ ăслав сочиненийĕ çырăр: 1) «Пуласлăхăма çапла куратăп», 2) «Очерк мана шухăша ячĕ», 3) «Пур ĕçре те тăрăшу кирлĕ».

Çапла вара, электрон вĕренӳ кĕнекин спецификине пула авторсен вĕренӳ содержанийĕн логикине тытса пынисĕр пуçне ансат ăнлантарассси çинчен шухăшлама, кун валли теори енчен те, практика енчен те меллĕ материал шырама тивет.

«Текст» темăна вĕрентесси ытти темăсене вĕрентессинчен ăнлантару материалне хатĕрлес енĕпе йывăр, мĕншĕн тесен кĕске текст заметкăпа справка очерксăр пуçне практикăра сахал тĕл пулать.

Эпир хатĕрленĕ материал вăл – электрон формачĕ тума сĕннĕ материал. Вăл юлашкинчен мĕнле сăн-сăпатлă пуласси компьютер епле йышăнса епле улăштарнинчен килет.

***Список литературы***

1. Виноградов Ю.М. Чăваш чĕлхи: 4-мĕш класс валли / Ю.М. Виноградов, А.Р. Федорова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017. – 206 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

2. Виноградов Ю.М. Чӑваш чӗлхи: 8-мӗш класс валли / Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2018. – 223 с.

3. Виноградов Ю.М. Чӑваш чӗлхи: 9-мӗш класс валли / Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова, Л.Г. Петрова. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2020. – 224 с.

4. Виноградов Ю.М. Чӑваш чӗлхи: 7-мӗш класс валли / Ю.М. Виноградов, Л.Г. Петрова. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2020. – 223 с.

5. Петрова Л.Г. Чӑваш чӗлхи: 6-мӗш класс валли / Л.Г. Петрова, Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2014. – 223 с.

6. Сергеев Л.П. Чӑваш чӗлхи: 5-мӗш класс / Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, Г.Ф. Брусова. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2017. – 239 с.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)